

Раштавӑн 10-мӗшӗнче И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗн тӗп корпусӗнче ҫӗнӗ ректор суйлас ыйтупа конференци иртнӗ.

Вӑрттӑн сасӑлавра Андрей Александров мала тухнӑ, 221 делегатран 207-шӗ уншӑн сасӑланӑ.

А.Александров 1966 ҫулта Краснодар тӑрӑхӗнчи Майкоп хулинче ҫуралнӑ. Ашшӗ те, амӑшӗ те Чӑваш Республикинчен пулнӑран Александровсем тӑван ене куҫса килнӗ. Ҫӗрпӳри 1-мӗш вӑтам шкулта вӗреннӗ хыҫҫӑн Андрей Юрьевич - ҫар хӗсметӗнче, 1990 ҫулта ЧПУра историк специальноҫне алла илет. 1997 ҫулта юриспруденци енӗпе ҫак заведениренех вӗренсе тухать. Унӑн - 60 ытла ӑслӑлӑх ӗҫӗ. Вӗсенче вӗренӳ тытӑмӗн ертсе пырас, социллӑ хӳтлӗх ыйтӑвӗсене, патшалӑх органӗсенчи правӑна йӗркелес ӗҫ-хӗле ҫутатнӑ.

Андрей Александров - экономика ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ, доцент. 2000 ҫулта - ЧР Патшалӑх Канашӗн Аппарачӗн ертӳҫи. 2000-2009 ҫулсенче - ЧПУ ректорӗн пулӑшуҫи, ректорат секретарӗ. 2010 ҫултанпа - вӗренӳ енӗпе ӗҫлекен проректор, кафедра пуҫлӑхӗ.

Çӗнӗ должноçа вӑл хӑйӗн кандидатурине РФ Вӗренӳпе ӑслӑлӑх министерстви çирӗплетнӗ хыççӑн йышӑнӗ.

**Ирина ИВАНОВА.**

**Геннадий ВЕРБЛЮДОВ**

**сӑн ӳкерчӗкӗ**